

Чӑваш патшалӑх университетӗнче «Ашмарин вулавӗсем» ӑслӑлӑхпа-практика конференцине ирттересси йӑлана кӗнӗ. Кӑҫал вӑл пӗтӗм тӗнчери ӑслӑлӑх конференцийӗ статуспа иртрӗ. Юпан 9-10-мӗшӗсенче ӑслӑлӑх форумӗ 9-мӗш хут пуҫтарӑнчӗ. Ӑслӑлӑх уявне Мари, Тутарстан, Удмурти республикисенчен, Испании, Турции ҫӗр-шывӗсенчен килнӗ ӑсчахсем тата университет ӗҫченӗсем, шкул ачисем хутшӑнма кӑмӑл турӗҫ. Конференцине  И.И. Иванов доцент П. Хусанкайӑн «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» сӑввине вуланинчен пуҫларӗ. Унтан вӑл ертсе пыракан студентсем хӑйсен пултарулӑхӗпе конференциеилемле сӑн кӗртрӗҫ, чӑваш классикӗсен сӑвисене вуларӗҫ. Кӗҫтенкки Иванов, Ҫеҫпӗл Мишши, Геннадий Айхи сӑввисем тӗлӗнмелле манаҫлӑ янӑрарӗҫ.

Конференцин официалла пайне филологи наукисен докторӗ, профессор, чӑваш тата танлаштаруллӑ литература пӗлӗвӗн кафедрин пуҫлӑхӗ В.Г.Родионов ертсе пычӗ.. «Ашмарин вулавӗсем» конференци пысӑк пӗлтерӗшлӗхне университетри наука енӗпе ӗҫлекен проректор В.Афанасьев палӑртрӗ. ЧР республикин тӗрлӗ министерствисенчен килнӗ С.В. Кудряшов, С.Д. Казаков саламлӑ сӑмахсем каларӗҫ. Пленарлӑ ларура Эктор Алос и Фонт (Испани) туна доклад пурне те шухӑша ячӗ. Халь Чӑваш патшалӑх гуманитари институтӗнче вӑй хуракан ҫак ӑсчах Чӑваш Республикинче икӗ чӗлхелӗх саккунне уяманнипе чӑваш чӗлхи Шупашкар хулин сӑн-сӑпатӗнчен ҫухалнӑҫем ҫухалсах пынине тӗпченӗ. Тӗрлӗ учреждени, траспорт чарӑнӑвӗ, урам ячӗсем вырӑсла ҫеҫ пулнине асархнӑ вӑл. «Каплах пулсан ҫитӗнекен ӑру пушшех те чӑвашла калаҫмӗ» - тесе пӗтӗмлетрӗ вӑл хӑйӗн докладне. Хусантан килнӗ Ф.Г. Галимуллин Чингиз Айтматов пирки тунӑ доклад та кӑсӑк пулчӗ. Малалла конференцие хутшӑнакансем секцисем ҫине пайланса ӗҫлерӗҫ. Ӑслӑлӑх форумӗн иккӗмӗш кунӗнче «Атӑлҫи халӑхӗсен литература историне тӗпчес проблемӑсем» ыйтупа «ҫавра сӗтел» йӗркелерӗҫ. Кунта та паянхи филологин актуаллӑ ыйтӑвӗсене хӗрӳ сӳтсе яврӗҫ. «Ҫавра сӗтеле» А.Ф. Мышкина профессор ертсе пычӗ.

**http://chfik.chuvsu.ru/?q=cv/node/1543**